

# Тăван Атăл

4

1987

# ЧĂВАШ СОВЕТ ПЛАКАЧĔН ПУÇЛАМĂШ ТАПХĂРĔ

Совет плакачĕ Октябрьти социализмлă Аслă революципе граждан вăрçин асар-писер вут-çулăмлă тăвăленче çуралнă. Шăпах çав тапхăр плакат пурнăçри питех те кирлĕ пысăк улшăнусен çивĕч хĕçпăшалĕ пулнине кăтартса панă, ăна кĕрешÿ йышравçи, политика ĕçĕн хĕрÿллĕ агитаторĕ туса хунă. Плакат вырăнĕ музейсенчи ылтăнланă рамăсенче мар, çын ытларах иртсе çÿрекен е пуçтарăнакан çĕрте. Ан тив, ĕмĕрĕ ун чылай чухне питĕ кĕске, çапах та плакат искусствин историйĕ Д. Моор, В. Дени, М. Черемных, В. Маяковский, А. Апсит, В. Спасский, Н. Кочергин пек чаплă ăстаçăсене сахал мар пĕлет.

Пирĕн халăхăн паттăр кĕрешĕвĕпе ĕçне-хĕлне хастаррăн хутшăннă тата искусствăн ытти тĕрлĕ тĕсĕсем пекех пролетариатăн пулас социализмла культурин никĕсне хывнă май, совет плакачĕ çĕкленсе аталаннин историйĕ нумай çынна интереслентерме пултарать.

Чăвашсен сăнарлă искусствин аталану çул-йĕрне ку таранччен пур енчен те пекех тĕплĕ çутатса панă. Апла пулин те, чăн малтанхи чăваш плакачĕсем мĕнле çуралнине тĕпчесси тата вĕсене искусствоведени çÿллĕшĕнчен тишкересси халиччен те анлăн çутатса памалли тема пулайман-ха. Тĕпрен илсен, çакăн сăлтавĕ чи пирвайхи плакатсем ытла та сахал тупăннинчен, вĕсене шырас ĕçе никамах та çине тăрса тимлеменнинчен килет.

Пирĕн республикăра плакатсем ÿкерес ĕçе М. Спиридонов, А. Сорокин, Г. Данилов тата çав вăхăталли хăшпĕр уйрăм художниксем пуçарса янă. Шел те, вĕсен плакачĕсем пирки халлĕхе пуринчен ытла ун чухнехи кĕске отчетсенчен çеç кăштах пĕлме пулать. Апла пулин те, архивсенче упранакан документсем пирвайхи плакатсем тема тĕлĕшĕнчен нумай тĕрлĕ пулнине кăтартса параççĕ. Сăмахран, акă, эпир халь 1921—1922 çулсенчи вăтăра яхăн чăваш плакачĕ пирки хăюллăнах калаçма пултаратпăр. Вĕсене совет влаçĕ ирттерекен тĕрлĕ мероприятисем, ĕçсыннисен çĕнĕ уявĕсем, профсоюзсен эрни, вут-шанкă хатĕрлемелли виçĕ эрнелĕх, хĕрлĕ армеец эрни, ялхуçалăхĕпе коопераци кампанийĕсем, Октябрь праçникĕпе Париж Коммуни кунĕ, çавăн пекех тĕрлĕрен конференцисемпе съездсен тĕлне ятарласа кăларнă. Çапла вара чăваш плакачĕ хăй çуралнă чи малтанхи кунран тытăнсах вăхăтпа тан утнă. Çакна Чăваш АССР Тĕп патшалăх архивĕн фондĕнче халь çинерех тупса палăртнă 5 плакатпа (вĕсене линолеум çинче касса кăларса ÿкернĕ) виçĕ эскиз та аван кăтартса параççĕ. Вĕсем чăннипех чи пирвайхи чăваш гравюрисем пулма тивĕçлĕ.

Çав плакатсем ун чухне нумай пулмасть туса хунă Чăваш автономиллĕ область историйĕн чи кăткăс тапхăрĕсенчен пĕринпе — 1921—1922 çулсемпе çыхăннă. Вăрах вăхăта тăсăлнă икĕ вăрçă çĕршыв хуçалăхне юхăнтарни тата Атăлпа Урал тăрăхне пăвса тытнă выçлăх çамрăк автономи облаçне экономика тĕлĕшĕнчен питех те пысăк йывăрлăхсем кÿнĕ. Шÿт-и, 1921—1922 çулхи хĕл тĕлне облаçри халăхăн сакăрвунă проценчĕ тырăсăр юлнă. Çавăнпа та ăна апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен пулăшас енĕпе килсе тухнă кăткăс лару-тăру çав вăхăтри чăваш плакачĕсен тематикинче тĕп вырăн йышăннă.

Архивра тупса палăртнă плакатсем хушшинче Октябрьти социализмлă Аслă революци тăвата çул тултарнă тĕле çапса кăларнă «Пилĕк юпа уйăхĕ» (авторĕ Г. Я. Поляков) чи пирвайхисенчен пĕри пулнă. Вăл вырăсла тата чăвашла пĕтĕмпе 1500 экземпляр тухнă. Ăна кашни уйрăм пайĕ тĕп темăна йĕркипе уçса паракан триптих теме пулать. Плакатăн «Малтанхи виçĕ юпа уйăхĕсем» тесе ят панă сулахай енчи пайĕнче «Колчак», «Деникин», «Юденич», «Врангель» тесе çырса хунă хĕрессемпе масар тĕмескисем умĕнче аллисене хĕç çине хунă рабочие ÿкернĕ. Ку ĕнтĕ çамрăк Совет çĕршывĕ хаяр çапăçусенче паттăррăн çĕнтернине ытарлăн пĕлтерет. Ÿкерчĕк айне сăвăласарах:

**«Совет йĕрки тапрансан,**
**Виçĕ çул вăрçса,**
**Виçĕ çул юн юхтарса.**
**Ĕçлекен халăх тăшман(ĕ)сене**
**Эпĕр çĕнтертĕмĕр,**
**Вăрçă пĕтрĕ»,**— тесе çырнă сăмахсем те çавнах калаççĕ. Плакатра рабочи умĕнче фабрикăсемпе заводсен ишĕлчĕкĕсем, унран сулахай енче ванчăк пăравус йăтăнса выртнине те ахаль ÿкермен. Художник çакăнпа вăрçăсене пула çĕршыв хуçалăхĕ пĕтĕмпех юхăнса-япăхса çитнине кăтартса парасшăн пулнă.

Триптихăн «4-мĕш юпа уйăхĕ» ятлă варринчи пайĕ халăха килсе çапнă тепĕр инкек—выçлăх çинчен калать. Ÿкерчĕкре тĕлăх хир варринче ÿксе вилнĕ лашапа типĕ çанталăка пула хăрса ларнă йывăç фонĕнче хуйха ÿкнĕ хресчен килйышне кăтартнă. Хресчен ури вĕçĕнче кăштах вăрлăх тултарнă пысăк мар хутаç выртать.

Плакатăн «5-мĕш юпа уйăхĕ» ят панă виççĕмĕш пайĕ вара содержанийĕпе пачах урăхла — оптимизмла янăрать. Кунта ĕç хресченĕсем çĕрĕçне лайăхлатнипе, рабочисем шултра промышленноçа ура çине тăратса çĕкленипе выçлăхпа чухăнлăха çĕнтернине сăнласа кăтартнă.

1922 çулхи январь уйăхĕ тĕлне Атăлпа Урал тăрăхĕнче 20 миллион



çын выçăпа асапланнă. Совет патшалăхĕ вĕсене çăлса хăварас тесе тимлесех васкавлă мерăсем йышăннă. Чăваш çĕршывне Мускавран, Украинăран, Витебск, Псков, Рязань, Рыбинск, Екатеринбург, Смоленск, Орел, Курск, Ярославль, Тула кĕпĕрнисенчен тырăпа çăнăх-кĕрпе, çĕрулми тата ытти тĕрлĕ апат-çимĕç таварĕсем килсе тăма пуçланă. Кунсăр пуçне Чăваш облаçĕнче хайĕнче те халăха çав хăрушă инкекпе кĕрешме çине тăрса мобилизацилемелле пулнă. Çав тĕллевпе 1922 çулхи январь уйăхĕнче «Совет влаçĕ хресчене вăрлăх парать», «Çур тырри вăрлăхне упрасси», «Çĕрулмине уя лартăр» плакатсен эскизĕсене хатĕрлеççĕ. Февраль уйăхĕн вĕçнелле «Çуракине хатĕрленĕр» плакат çапăнса тухать. Унăн пĕр ÿкерчĕкĕнче пушă кĕлетре алли-




сене хыпăнчăклăн сарса пăрахнă хресчене кăтартнă. «Çуркунне те çитрĕ, вăрлăхăм çук, мĕскер акас ĕнтĕ», хаш хуйхăрать вăл. Тепĕр ÿкерчĕкĕ Чăваш çĕршывне Совет влаçĕ панă пулăшу çинчен каланă: «Канаш ирĕкĕ пирĕн Чăваш облаçне 625 пин пăт çуртри вăрлăхĕ парать: вĕсенчен 500 пин пăт сĕлĕ, 50 пин пăт урпа, 42 пин пăт вир, 15 пин пăт хуратул, 10 пин пăт пăрса, тата ытти тырă вăрлăхĕсем те, 1 мĕльюн пăт паранкă (çĕрулми). Облаçри çĕрĕç тăвакан пайĕ, вăрлăх нумайтарах илес тесе, Мускаври çĕр Комиссариатне ыйтса янă». Ÿкерчĕкре хресчен çынние тырă тултарнă михĕ паракан власть представительне кăтартнă. Виççĕмĕш ÿкерчĕк хресченсене çитес ака-суха ĕçĕсем валли вăрлăх упраса хăварма агитацилет. «Çиме çук пулсан та, вăрлăх хăваратăп, кăçал акатăп та, тепĕр çулне çăмăл пулĕ», теççĕ ун тăрринчи сăмахсем. Плакатăн юлашки ÿкерчĕкĕнче хресченсем эртелленсе çураки тунине кăтартнă. Унта çак сăмахсене вулатпăр: «Лаша çукки—сухапуçне, сухапуç çукки — сÿрепе, сÿре çукки—вăрлăхпа, вăрлăх çукки — лашапа, — çапла эртелленсе выçлăхпа кĕрешеççĕ».

Плакат вăрлăхпа перекетлĕ упрама чĕннĕ тата выçлăхпа ушкăнпа кĕрешни лайăхрах пулнине кăтартса панă хушăрах Совет влаçĕ хресченсене парса тăракан пулăшу çинчен те каласа хăварать.

Çапла та, Главполитпросвет 1922 çулхи январь уйăхĕнче вырăнсене ярса панă циркулярта выçăпа аптăракансене çителĕклĕ пулăшманнине те асăрхаттарнă-мĕн. Çавна май выçăпа асапланакан çынсене пулăшмалли урăх майсем шыраса тупмалла пулнă. Çакна ют çĕршывсенчен тырă сутăн илме чиркÿсенчи хаклă япаласене конфискациленипе те пурнăçа кĕртме тивнĕ. Çапла вара пĕтĕм çĕршывĕпе чиркÿсенчи ылтăнпа кĕмĕл япаласене тата хаклă йышши чулсене пуçтарма тытăннă. Çак ĕçре те плакат малти вырăн йышăннă. 1922 çулхи март уйăхĕнче Чăваш облаçĕнчи политпросвет «Чиркÿ пурлăхĕ выçă аптăракансемшĕн» текен плакат 500 экз. чăвашла, 200 экз. вырăсла çапса кăларать. Чиркÿсенчи хаклă пурлăха тытса илме кирлĕ пулнине плакатра чиркÿ вĕрентĕвĕн догмачĕсемпех ăнлантарнă: «Христос каланă: «Çăлăнас тесен пурлăхна пар та, ман хыçăмран пыр», тенĕ». Ку сăмахсене пуян çынна чухăна пулăшма чĕнекен Христоса ÿкернĕ пĕрремĕш ÿкерчĕк айĕнче вулатпăр. Тепĕр ÿкерчĕкĕ икĕ çуршар пайран тăрать: пĕринче чиркÿ ăшчиккинчи эрешлĕ интерьера, теприне хресчен пÿртĕнчи чир-чĕрпе выçлăх хавшатса çитернĕ чухăн çынсене кăтартнă. «Пирĕн чиркÿсенче темĕн чухлĕ ылтăн, кĕмĕл, хаклă йышши чулсем усăсăр выртаççĕ. Çав вăхăтрах халăх выçăпа аптăраса, шыçăнса вилет»,— çырнă ун айне. Юлашки ÿкерчĕкĕ çапла чĕнет: «Чиркÿ валли кирлĕ мар мула илес пулать те выçăпа аптăракансене тырă илсе парас пулать. Вара Христос хушни вырăна килĕ».

Плакат Совет влаçĕ ирттерекен мероприятисен тĕп пĕлтерĕшне питĕ кĕскен те ярт уççăн ăнлантарса парать. Главполитпросветăн пĕр циркулярĕнче: «Хаçатсем, агитаторсем, плакатсемпе листовкăсем Атăл тăрăхне çăлса хăварас ĕçре çирĕп те усăмлă позици кирлĕ çĕрте час-часах христианла ултавлă шанчăкăн йăнăш çулĕ çине тăраççĕ...» тесе палăртнă пулсан, чăваш художникĕсем вара шухăша тÿрех ăнланса илмелле уçса панă, çав йăнăша туман. Çакă хăех вĕсен позицийĕ тĕрĕс пулнине, вĕсем Совет влаçĕн задачисене лайăх ăнкарнине кăтартса парать. «Чиркÿ пурлăхĕ выçăпа аптăракансемшĕн» плакат Чăваш автономи облаçĕнче çеç мар, Ĕпхÿ, Самар, Чĕмпĕр, Хусан кĕпĕрнисемпе Çĕпĕр çĕрĕсем таранах сарăлнă пулнă.

Чăваш АССР патшалăх Тĕп архивĕнче тупнă «Çĕрулмине уя лартăр» плаката 1922 çулхи март—апрель уйăхĕсенче хатĕрлесе кăларнă. Вăл çичĕ ÿкерчĕкрен тăрать, выçлăх çул условийĕсенче çĕрулми ытти ялхуçалăх культурисенчен лайăхрах пулни çинчен каласа парать. Кун умĕн каланă плакат пекех вăл та хамăр облаçра çеç мар, ун тулашĕнчи чăвашсем хушшинче те нумай çĕрте сарăлнă.

Çирĕммĕш çулсен пуçламăшĕнче Российăри телеграф агентствин (РОСТАн) Чăваш уйрăмĕ 1921 çулхи октябрь уйăхĕ тĕлне ÿкерчĕксемпе илемлетсе кăларма тытăннă «Плакат хыпарĕ» («Плакатный вестник») йышши форма та ăнăçлă аталанма пуçлать. Халлĕхе пирĕн çав плакатсене хăçан, миçе номер тата мĕнле темăсемпе кăларнине тĕп-тĕрĕс пĕлсе çитме май килмерĕ. Чăваш РОСТА уйрăмĕ 1921 çулхи ноябрь уйăхĕшĕн панă отчетра çавăн пек вуна «Хыпар» линолеум клишесемпе кăларнине кăтартнă. 1921 çулхи декабрьпе 1922 çулхи январь уйăхĕсемшĕн тунă отчетсенче çав плакатсенчен хăшĕ-пĕрин темисене те пĕлтернĕ. Сăмахран, «Хыпарăн» октябрь уйăхĕнче тухнă номерĕ «Мускав Чăваш облаçне», «Америка пулăшăвĕ», «Калуга хресченĕсем выçăпа аптăракансене», «Выçлăхран çăлăнăç—пĕр-пĕрне пулăшнинче», «Усламçăсемпе чухăнсем мĕнле пулăшаççĕ», «Партие тасатни», «Шкула вутă кÿрĕр» темăсемпе ÿкернĕ сакăр картинăран тăрать; декабрьти номере «Çитĕнÿсемшĕн тĕслĕх», «Выçлăха акă мĕнле çĕнме пулать», «Советсен съезчĕ тĕлне», «Совет республикин тивĕçлĕ гражданинĕ», «Совет влаçĕ взятка илекенсене хытă айăплать», «Путланчĕ», «Чăваш автономи облаçĕн пурĕ мĕн чухлĕ çĕр» темăсемпе пĕтĕмпе тăхăр картина ÿкернĕ; 1922 çулхи январь уйăхĕнче тухнă номерте вара ялхуçалăхне ура çине тăратассине халалланă; вăл сакăр гравюрăран тăрать, тиражĕ 2000 экземпляр. Кунсăр пуçне Российăри телеграф агентствин Чăваш уйрăмĕ облаçре туса ирттерекен ĕçсемпе—«Выçлăхпа кĕрешессипе», «Çураки ирттерессипе», «Чиркÿ пурлăхне выçлăхпа аптракансене пулăшма» ярассипе, «Хаçата пулăшассипе» çыхăнтарса ÿкерчĕксемпе илемлетнĕ «Плакат хыпарĕсем» кăларнă, хаçатсем валли клишесем туса панă. Халлĕхе пирĕн ЧăвашРОСТА 1921 çулхи декабрь уйăхĕнче пĕтĕмпе 550 экземпляр кăларнă «Плакат хыпарĕн» 2-мĕш номерне кăна тупма май килчĕ-ха.

«Плакат хыпарне» Российăри телеграф агентствин Чăваш уйрăмĕн хаçатсен залне, çав уйрăм вырнаçнă çуртăн «сатира чÿречине» тата Хĕрлĕ площадьри витринăна çакса хунă, облаçри уессене ярса панă. РОСТАн Чăваш уйрăмĕн отчечĕсем «ун патне хресченсем ялсенче пысăк ушкăнсемпе пуçтаріннине» кăтартса пăраççĕ. Ку ĕнтĕ облаçри халăхăн чи пысăк




пайӗ хут пӗлмен пирки «Плакат хыпарӗ» пуриншӗн те ӑнланмалла пулнинчен килнӗ, плакачӗ хӑй вара халӑхшӑн хӑйне майлӑ политвӗренӳ шкулӗ вырӑнне пулса тӑнӑ.

Чӑваш АССР Тӗп патшалӑх архивӗн фондӗнче тупнӑ плакатсен авторӗсем нумайӑшӗ паллӑ мар-ха. Халлӗхе эпир «Пилӗк юпа» авторне Григорий Яковлевич Полякова кӑна хушаматпа инициалне плакатӑн сылтӑм енчи аялти кӗтессине ҫырса хунинчен пӗлетпӗр. ЧӑвашРОСТА отчечӗсем тӑрӑх «Плакат хыпарӗсене» те вӑлах тунӑ, кунсӑр пуҫне вӗсене пӗр алӑпа ҫырса ӳкерни те авторӗ пӗр ҫын — Г. Я. Поляков пулнине ҫирӗплетсе парать.

Шел те, чӑваш искусствоведенийӗнче ҫав художникӑн пултарулӑхӗ ҫинчен ҫырни ниҫта та ҫук. Искусство ыйтӑвӗсене ҫутатакан хӑшпӗр кӗнекесенче Г. Я. Поляков ятне теплерен пӗрре куркалатпӑр пулин те, ӑна художник тесе мар, преподаватель тесе кӑна асӑннӑ.

Чӑваш АССР Тӗп патшалӑх архивӗн фончӗсенче Поляковӑн ҫав вӑхӑтри биографине кӑштах пӗлме май паракан хӑшпӗр документсем тупӑнкаларӗҫ-ха. Вӗсем тӑрӑх Григорий Яковлевич 1901 ҫулта ҫурални, национальноҫӗпе вырӑс пулни паллӑ. Художник ӗҫне, 1917—1920 ҫулсенче пулас, Хусанти художество училищинче вӗреннӗ. Кунта ҫакӑ та интереслӗ. Паллӑ совет графикӗ, плакат искусствине пуҫарса янӑ Виктор Николаевич Дени художник-карикатурист 1918 ҫулта Хусанта Атӑл тӑрӑхӗнчи ҫар округӗн штабӗнче ӗҫленӗ. Ҫавна май Г. Я. Поляков Денипе хӑйпе паллашман пулсан та унӑн ҫав вӑхӑтри плакачӗсене курнах ӗнтӗ. Шупашкара вӑл 1921 ҫулхи июль уйӑхӗнче килет, малтанах облаҫри политикӑпа ҫутӗҫ комитечӗн секретарӗнче, август уйӑхӗнчен пуҫласа ҫав комитет ҫумӗнчи сӑнарлӑ искусствӑсен секцийӗн заведующийӗнче ӗҫлет, ҫав вӑхӑтранпах пулмалла, Чӑваш облаҫӗнчи РОСТА уйрӑмӗнче художник ӗҫӗсене туса пыма тытӑнать. 1921 ҫулхи август—сентябрь уйӑхӗсенче Поляков Шупашкарта тӗрлӗрен художество ӗҫӗсем тӑвакан декораципе плакат мастерскойӗ йӗркелеме тимлӗ хутшӑнать. 1922 ҫулхи ҫуркунне вӑл Хусана куҫать, кунти «Гажур» издательствӑра тата кинорекламӑсем хатӗрлекен кантурта ӗҫлеме тытӑнать. 1926 ҫулта каллех Шупашкара таврӑнать, Чӑваш кӗнеке издательствинче ӗҫлет. 1927 ҫулта ӑна АХРР Чӑваш филиалӗн членне илеҫҫӗ. Ҫав ҫулах, сентябрь уйӑхӗнче, Поляков хӑйӗн ӗҫӗсемпе Художество наукисен Патшалӑх академийӗ Мускавра йӗркеленӗ выставкӑна та хутшӑнать.

Архив фондӗнче тупса паллашнӑ плакатсем — сӑнарлӑ искусствӑн ҫав питех те интереслӗ тӗсӗ Чӑваш ҫӗршывӗнче мӗнле ҫуралса вӑй илме пуҫланине тавҫӑрма пулӑшакан пӗчӗкҫӗ тӗпренчӗксем кӑна-ха. Унтанпа плакат чылай вӑрӑм ҫул утса тухнӑ. Ҫав искусствӑра хӑйӗн традицийӗсем, мелӗ-меслечӗсем, ҫӗнӗ жанрсем пулса кайса ҫирӗпленнӗ. Ҫапах та вӑл вӑй илсе ҫирӗпленсе пынӑ пуҫламӑш тапхӑра тӗпчесе ҫитересси кун йӗркинчен тухса ӳкнӗ теме ҫук. «Ҫул хысҫӑн ҫул иртӗ,— граждан вӑрҫи ҫулӗсенче РОСТА чӳречи кӑларнӑ плакатсене аса илсе ҫырнӑ В. Маяковский, — йӑпӑх-япӑх хута вӑхӑт сӑрхӑтарнинчен упраса, ҫав чӳречесемпе ученӑйсем чакаланакан пулӗҫ».

Чӑваш совет плакачӗн историне тӗпчесе тишкермесӗр сӑнарлӑ искусствӑн пирӗн общество пурнӑҫӗнчи пӗлтерӗшне тивӗҫлипе хаклама та, плакат аталанӑвӗн историйӗпе унӑн тӗрлӗ тапхӑрсенчи паха улшӑнӑвӗсене тарӑннӑн пӗлсе ӑнланма та ҫук.

Паллӑ совет поэчӗ Д. Бедный пӗр сӑввинче сӑмах халлӗн ҫеҫ калани манӑҫасси, анчах «пурнӑҫри ҫивӗч самантсене сӑнласа кӑтартнӑ плакат-документсем ӗмӗрлӗхе юласси ҫинчен» каланӑ. Шел те, ҫирӗммӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнчи ҫавнашкал плакат-документсем пирӗн питӗ сахал упранса юлнӑ. Ҫавӑнпа та республика культурин еткерӗнче хаклӑ пуянлӑх пулса тӑракан ҫав паха документсене искусствоведсен, историксемпе архивистсен ҫине тӑрсах пӗрле шыраса тӗпчени кирлӗ.

**В. ТКАЧЕНКО,**
**ЧАССР Тӗп патшалӑх архивӗн аслӑ наука сотрудникӗ.**

# СОЦИАЛИЗМ ҪӖРШЫВӖН ТУРТӐМӖ

**«Парти тӗнчери рабочисен юхӑмӗн мӗнпур отрядӗсен килӗшуллӗ ӗҫне вӑйлатассине, тӗрлӗрен ҫӗршывсенчи расна ҫул-йӗр тытса пыракан профсоюзсен, ҫамрӑксен, хӗрарӑмсен, хресченсен организацийӗсемпе демократилле ытти организацисем пӗр-пӗринпе ҫыхӑну тытса ӗҫлессине тарӑнлатса пырассине пысӑка хурса хаклать,— тенӗ КПСС Программин ҫӗнӗ редакцийӗнче.— Тӗнчери рабочи класпа унӑн коммунизмла авангарчӗ умӗнче хӑйӗн историлле ответлӑхне тарӑнлатса, КПСС малашне те... тӑванла партисен пӗтӗҫӳлӗхӗшӗн тата вӗсем пӗр-пӗринпе ҫыхӑну тытса ӗҫлессишӗн, коммунистсен интернационалла пӗршухӑшлӑхӗшӗн, коммунизм юхӑмӗ тӗнче вӑрҫине сирсе ярас ӗҫе вӑй хурассине ӳстерессишӗн мӗн кирлине пӗтӗмпех тӑвӗ».**

**Совет коммунисӗчӗсем яланах капитал тӗнчинчи хӑйсен класс тӑлӗшӗнчи юлташӗсем майлӑ пулнӑ. Ҫалас пулать, тӗнчери ӗҫсыннисен интернациллӗ туслӑхне аталантарас ӗҫе Чӑваш республикинчи коммунистсем те хастар хутшӑннӑ. Совет влаҫӗн малтанхи ҫулӗсенче тӗнчери пролетариат вӗсене класс тӑшманӗсемпе хӑюллӑ кӗрешме хавхалантарнӑ. Йывӑр тапхӑрта, уйрӑмах ҫирӗммӗш ҫулсен пуҫламӑшӗнче, ытти ҫӗршывсенчи коммунистсем йӗркеленӗ пулӑшу Чӑваш тӑрӑхне те ҫитнӗ. Ҫаярахпа Чӑваш ҫӗршывне чикӗ леш енчен килекен рабочисен делегацийӗсем, коммунистсен партийӗсем янӑ хӑнасем ҫамрӑк совет ҫӗршывӗнчи ӗҫсемпе паллашнӑ. Вӗсем большевиксем тытса пыракан ҫул-йӗр экономикӑпа культура енчен питӗ кая юлнӑ вак халӑхсене телейлӗ пурнӑҫ патне кӑларнине хӑйсен куҫӗпе курнӑ. Ҫавнашкал тӗлпулусем тӗнчери пролетариатӑн пӗршухӑшлӑхӗпе туслӑхне ҫирӗплетсе пынӑ.**

**Чӑваш ҫӗрӗнчи ӗҫсыннисем хӑйсем те ытти ҫӗршывсенчи пролетариата кӗрешӳре хавхалантарма, пулӑшма тӑрӑшнӑ. Тӗслӗхрен, 1919 ҫулта Венгрире Совет республики ҫурал-**

Хакĕ 50 пус
Индекс 73392

© «РОДНАЯ ВОЛГА» № 4 1987 г.

Ежемесячный литературно-художественный и общественно-политический журнал

Орган Союза писателей Чувашской АССР
Издается с 1931 года на чувашском языке

ПРОЗА

Николай ГРИГОРЬЕВ. Ленин сасси. Калав. . . . . . 4
Валентина ИЛЬИНА. Йӳнеҫӳллĕ ҫын. Повесть. . . . . 6
Константин ПЕТРОВ. Сенкер ҫăлтăр. Роман. . . . . . 31
Виталий ЕНЕШ. Вичкĕн куҫпа. . . . . . . . 45

ПОЭЗИ

Вениамин ТИМАКОВ. Ĕҫĕмĕре Ильич хаклать. Сăвă. . . 3
Калистрат ВОРОБЬЕВ. Ҫăкăр. Сăвăсем. . . . . . . 5
Аркадий ЛУКИН. Таса чунăмпа. Сăвăсем. . . . . . 28
Николай КУШМАНОВ, Геннадий ЮМАРТ, Георгий ИРХИ. Ҫĕнĕ сăвăсем. . . . . . . . . 67

ПУБЛИЦИСТИКА, ОЧЕРК

Сергей ПОЛКАЧЕВ, Владимир ГРИГОРЬЕВ. Тенкĕ пусран пухăнать. . . . . . . . . 2
Владимир ТКАЧЕНКО. Чăваш совет плакачĕн пуҫламăш тапхăрĕ. . . . . . . . . . . 61
Арсений ИЗОРКИН. Социализм ҫĕршывĕн туртăмĕ. . . 63
Юхма МИШШИ. Белорус писателĕ чăвашсем ҫинчен. . . 66
Сергей ПОЛУЯН. Чăваш халăхĕн чĕрĕлĕвĕ. . . . . 66

ЛИТЕРАТУРА КРИТИКИ

Куҫару — пысăк ăсталăх (Ҫавра сĕтел). . . . . 56

ТĔРЛĔРЕН

Тĕпел кукри. . . . . . . . . . . 68
Кулăш тĕкĕрĕ. . . . . . . . . . . 70
Чăвашъен. Юрă. . . . . . . . . . . 72
Пирĕн вернисаж. . . . . . . . . . . 72

Хуплашкан пĕрремĕш страницинче: РСФСР халăх художникĕ Н. В. Овчинников ӳкернĕ «В. И. Ленинăн Кремльти приемнăйĕнче» картина.

П. СЫМКИН фоторепродукцийĕ.

Главный редактор Л. В. ТАЛЛЕРОВ

Редколлегия: Ю. Г. АЙДАШ, В. О. АЛАГЕР, А. С. АРТЕМЬЕВ, П. В. АФАНАСЬЕВ, Н. Г. ГРИГОРЬЕВ (отв. секретарь), Н. С. ДЕДУШКИН, А. В. ЕМЕЛЬЯНОВ, Г. В. КРАСНОВ, В. П. КУЗЬМИН (зам. гл. редактора), П. К. ЛЬВОВ, Г. Т. ТЕРЕНТЬЕВ, В. П. ТИМАКОВ

Адрес редакции: г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
Телефоны: гл. редактор — 21-12-69, зам. гл. редактора — 25-15-21, отв. секретарь — 25-15-24, отдел прозы — 21-43-68, отдел поэзии — 25-15-28, отдел публицистики — 25-15-26, отдел критики — 25-15-27, тех. редактор — 21-36-84.
Издатель: Издательство Чувашского обкома КПСС

НТ 11200. Сдано в набор 30.12.86 г. Подписано к печати 02.03.87 г. Формат бумаги 84x108 $^1/_{16}$. Высокая печать. Объем 7,56 усл. печ. л. Учетно-изд. л. 10,6. Тираж 47 000 экз. Заказ № 1. Цена 50 коп. Индекс 73392.

Типография издательства Чувашского обкома КПСС, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.